22-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 АВГУСТ 11 ШАМАТКУН 154(6905) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Кĕракине кăтартуллăн иртерер

Республикăн чылай районĕсенче хĕрсех тырă вырма тытăнчĕç. Çакăнпа пĕрлех кĕрхи тырăсем акмалли вăхăт та çитрĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ республикăра кăçал кĕрхи тырăсем акмалли чи лайăх вăхăт августăн 10-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулать тесе кăтартса пачĕç.

Малта пыракан колхозсем вăйлă тырпулăн никĕсне ака вăхăтĕнчех хывса хăвараççĕ. Вĕсем çĕре вăхăтра тата лайăх сухаласа, ăна кирлĕ пек пăхса усраççĕ, акмалли вăрлăха тасатса хураççĕ те акас умĕн вара ăна пур енчен те тĕрĕслеççĕ, тырăсене агротехника кăтартнă чи лайăх вăхăтра акса хăвараççĕ.

Кăçал та малта пыракан Вăрнар, Калинино, Етĕрне тата ытти районсенчи колхозсем июлĕн 10-мĕшĕччененех çĕртме сухи туса пĕтерчĕç.

Кăçал пирĕн чылай колхозсенче кĕрхи тырăсем ăнăçлăх пулмарĕç: хăшпĕр çĕрте кĕрхи тырă калчисем çĕрсе кайрĕç, тепĕр çĕрте вара вĕсем сивĕпе пĕтрĕç. Ялхуçалăх специалисчĕсем тĕпчесе пăхса, кĕрхи тырăсем мĕншĕн пĕтнин çак сăлтавĕсене кăтартса пачĕç: чи малтанах, вăрлăха çиеле акса хăварнă, çакна пула вара калча тĕввине витсе тăракан тăпра ăна сивĕрен сыхлама пултарайман, унсăр пуçне, çĕртме пуссине акас умĕн çеç иккĕмĕш хут сухаланă пирки, акнă хыççăн вара кăпшак тăпра пусăраннă та калча тĕввине витсе тăракан тăпра сийĕ татах та çӳхелсе юлнă; çĕртме сукине ăшăх тунă пирки юр шывĕ шалалла сăрхăнса кĕреймесĕр çиелте капланса тăрса калчана çĕртнĕ; юлашкинчен, акма кирлĕ чухлĕ типĕтсе çитереймен çĕнĕ вăрлăх акса хăварнă, кун пек вăрлăх час шăтмасть, çапла вара кĕрхи тырăсем лайăх тĕмленмесĕрех юр айне кĕрсе юлнă.

Кăçалхи кĕракинче çак йăнăшсене пирĕн текех тумалла мар.

Халĕ ĕнтĕ кĕрхи тырăсем акмалли вăхăт çитрĕ. Халĕ пĕр кун та, пĕр сехет те тăхтаса тăмасăр, колхоз руководителĕсен, бригадирсен кĕрхи тырăсем акмалли пусса халех уя тухса тĕрĕслесе тухмалла. Вара акмалли хире культивацилесе е сӳресе çемçетмелле. Çĕрĕç специалисчĕсен кашни колхозăн кашни участокне кĕрхи тырă акма мĕнле хатĕрлесе çитернине тĕрĕслесе тухмалла, хытса кайнă е çумкурăкĕ айне пулнă çĕр çине акма ирĕк памалла мар.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ кĕрхи тулăн вăрлăххлăх участокĕсене августăн 15-мĕшĕччен акса пĕтерме хушрĕç. Çакна шута илсе, кашни колхозрах чи малтан кĕрхи тулăн вăрлăххлăх участокĕсене акма тытăнмалла. Вăрлăх участокĕсем валли чи лайăх вырăнти çĕре суйласа илмелле, ăна пур енчен те лайăх кăпкалатса çемçетмелле. Вăрлăх участокĕ çине Госсортфондран илнĕ сортлă вăрлăха çеç акмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çапла асăрхаттарчĕç: çĕртме пуссине акас умĕн çеç сухалани тĕрĕс мар тата агротехника енчен сиенлĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ кĕрхи тырăсем акмалли иккĕмĕш хут сухаламан участоксене халех, авăн çапма тата государствăна тырă леçме пуçличчен сухаласа пăрахмалла.

Кăçалхи кĕраки тырпул пухса кĕртмелли хĕрӳ ĕç тапхăрĕпе тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тапхăрпа пĕр вăхăтрах килнĕ пирки, ку ĕçсене пĕтĕçтерсе организацилеме пĕлни уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăрать. Çакна шута илсе, кашни колхозрах ĕç вăйĕпе туртăм вăйне тырпул пухас ĕçпе кĕраки валли тĕрĕс валеçсе вырнаçтармалла, ялхуçалăхĕнчи çак пысăк та паха ĕçсене вăхăтра тăвас тесе, колхозниксемпе колхозăн мăйракаллă шултăра выльăхĕпе ялхуçалăх ĕçĕнче анлăнрах усă курмалла.

Çак çӳлте асăннă условисене МТС руководителĕсен те шута илмелле. МТС-сен тырпул пухмалли машинисем те, тырă акмалли машинисем те çĕрĕн-кунĕн ĕçлемелле.

Партипе правительство пирĕн колхозсене çитес çул акма кĕрхи тырăсен вăрлăхне кăçал хатĕрлесе хума хушаççĕ. Анчах та, малашнехине курма пĕлмен хăшпĕр колхоз руководителĕсен айăпĕпе, чылай çĕрте пĕлтĕр ырашпа кĕрхи тулă вăрлăхне хывса хăварман. Çакна пула ĕнтĕ республикăри чылай колхозсем умĕнче вăрлăх тупас ыйту çивĕччĕн тăрать. Вăрлăх участокĕ çинчи тырпул пулса çитмен, пĕлтĕр вăрлăх хывса хăварман. Анчах кĕракине пĕр куна та кая хăварас мар текен колхоз руководителĕ ĕçе çакăншăн чарса тăрас çук. Вăл вăрлăх тупать, кӳршĕри колхозран вăрлăх кивçен илсе те пулин вăхăта акса хăварать.

Пирĕн республикăри нумай колхозсем Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Кашни колхозăн, кашни колхозникăн, ялхуçалăх специалисчĕн тивĕçĕ—тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем вăхăтра парса татасси тата кăçалхи кĕракине вăхăтра тата кăтартуллăн ирттересси пулать.

Эпир тăватă çул хушши этемлĕхĕн хăрушă тăшманне—фашизма çĕнтерес ятпа хамăрăн вăя шеллемесĕр ĕçлерĕмĕр: Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар парса тăтăмăр. Эпир çав усал тăшмана çĕнтертĕмĕр. Халĕ пирĕн государство умĕнче çĕнĕ задача—Япони агрессорне, пирĕн Инçетри Хĕвелтухăçне ĕмĕрсем хушши хăпсăнса пурăнакансккере, çапса аркатас задача тăрать. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар ку задачăна та тивĕçлипех пурнăçа кĕртессине эпир шансах тăратпăр, пирĕн ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса тăрĕç. Пирĕн халăхпа Хĕрлĕ Çара аслă çулпуç Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ патне ертсе пырать.

Хамăрăн Тăван çĕршывăн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне ӳстерес тата хамăрăн Совет çĕршывне пур енчен те тулăх çĕршыв тăвас тесе, колхоз хресченĕсем кăçалхи кĕракине кĕске вăхăтра кăтартуллăн ирттерĕç, çитес çулхи вăйлă тырпулăн çирĕп никĕсне хывса хăварĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 10-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Совет çарĕсем çапăçса Маньчжури территорине шалалла кĕрсе пынă.

Тинĕс тăрăхĕнче пирĕн çарсем, вăйлăн çапăçнă хыççăн, японецсен нумай вăхăтчен вăйлăн хӳтĕленмелли çирĕплетнĕ узелĕсене — ПОГРАНИЧНАЯ, ДУННИН, САНЧАГОУ хулисемпе чугун çул станцийĕсене штурмласа тытса илнĕ, малалла 30 километр кайса, КВЖД çинчи СЯОСУЙФЫНХЭ (Хобей), СИЛИНЬХЭ тата МАЦЯОХЭ станцисене тытса илнĕ.

ХАБАРОВСКРАН кăнтăр-хĕвеланăç еннерех тата кăнтăрарах пирĕн çарсем АМУР шывĕн кăнтăр çыранĕнчи ЛОБЕЙ, ТУНЦЗЯН (Лахасусу) хулисене тата УССУРИ шывĕн хĕвеланăç çыранĕнчи ШАОХЭ, ХУТОУ (Хулинь) хулисене çапăçса тытса илсе, çак асăннă хуласенчен 20 километр малалла кайнă.

БЛАГОВЕЩЕНСК районĕнче пирĕн çарсем АМУР шывĕ урлă каçса, унăн кăнтăрти çыранĕнче САХАЛЯНЬ, АЙГУНЬ хулисене тытса илнĕ те кăнтăр еннелле малалла 15 километр кайнă.

Байкал леш енче пирĕн çарсем, хăвăрттăн пырса çапнине пула, çулсен паха узелне тата тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ хӳтĕленмелли пунктне—ХАЙЛАР хулипе чугун çул станцине çапăçса тытса илнĕ. Çавăн пекех тата ДАЛАЙ-НУР кӳлли районĕнче пирĕн çарсем АРГУНЬ чугун çул станцине йышăннă та, çак асăннă вырăнсенчен 20 километр малалла кайнă.

БУИР-НУР районĕнче пирĕн çарсем ХАЙЛАР хулинчен кăнтăр еннерехре ПЫСĂК ХИНГАН тăвĕсем патне çитнĕ.

Августăн 10-мĕшĕнче кун каçиччен пирĕн çарсем Байкал леш енче Пысăк Хинган ту хырçи еннелле 170 километр малалла кайнă.

Пирĕн авиаци Маньчжурири тĕп чугун çул узелĕсене пыра-пыра çапнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Япони правительстви Совет Союзĕн Токиори посолне каласа пани

ТАСС пĕлтерни

Халĕ кăна Токиоран пĕлтерӳ илнĕ, ун та çапла каланă: паян, августăн 10-мĕшĕнче, Совет Союзĕн Япониri посолĕ Я. А. Малик хăйĕн патĕнче Японин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Того господинпа тĕл пулнă. Того господин Совет посолне çакăн пек каласа панă:

«Япони правительстви кăçалхи июлĕн 26-мĕшĕнче союзниксем панă декларацин, Совет правительстви те пĕрлешнĕ декларацин условийĕсене йышăнма хатĕр, Япони правительстви çав декларацире Японие никама пăхăнмасăр тытса тăракан императорăн тивĕçлĕхĕсене хĕсекен требованисем çук пулĕ тесе ăнланать. Япони правительстви çак тĕлĕшпе хăйне уççăн каласа пĕлтерме ыйтать».

Того господин тата çакна пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Англин тата Китайăн правительствисене те Швейцари урлă çакăн çинченех каласа панă.

Монголи Халăх Республики Японие хирĕç вăрçа тухни çинчен пĕлтерни

УЛАН-БАТОР, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине Кĕçĕн Хурал тата Монголи Халăх Республикин Министрсен Совечĕ хăйсен пĕрлешӳллĕ ларăвĕнче Монголи Халăх Республики Японие хирĕç вăрçа тухни çинчен пĕлтерессипирки пĕр кăмăллă пулса решени йышăннă.

Ăмăртăва хутшăннă артельсем

Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва пысăк предприятисемпе пĕрлех промысла артелĕсем те хутшăнаççĕ. Промартельсен ăмăртури тĕллевĕ—ĕçсыннисем валли кулленхи кирлĕ таварсене ытларах туса кăларасси пулать.

Шупашкарти Куйбышев ячĕпе тăракан артель коллективĕ, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри производство планне октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма, планран ирттерсе ĕçсыннисем валли кулленхи кирлĕ таварсем 100 пин тенкĕлĕх туса кăларма, таварăн хăйне ларакан хакне 10 процент чухлĕ чакарма, продукци пахалăхне лайăхлатма пулнă.

Артельре ĕçлекенсем çĕнĕ йышши изделисем тума вĕренес тата алăстаççем хатĕрлес тĕлĕшпе те татăклă обязательствăсем илнĕ. Çак çул пĕтиччен йывăç кĕреçесем, çăкăр пĕçермелли чашăксем, ача-пăча вылямалли теттесем туса кăларма пуçлама, 10 çынна артель ĕçне вĕрентсе çитерме пулнă.

Производство цехĕсемпе алăстаççем пурăнакан çуртйĕрсене хĕле хатĕрлес тата артелĕн подсобнăй хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине те палăртнă.

Çак кунсенче Шупашкарти «Пекарь» артельте ĕçлекенсен пухăвĕ пулчĕ. Унта Мускав хулинчи промыслă кооперацин работникĕсем Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине сӳтсе-яврĕç. Çав чĕнӳ çине ответлесе, «Пекарь» артельре ĕçлекенсем социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç тата Шупашкарти ытти артельсене ăмăртăва чĕнчĕç.

«Пекарь» артельре ĕçлекенсем çакăн пек обязательствăсем илчĕç: 1945 çулхи производство планне Октябрь уявĕ тĕлне тултармалла; ĕç тухăçлăхне, планпа пăхнинчен, 12 процент чухлĕ ӳстермелле; таварăн хăйне ларакан хакне иртнĕ çулхинчен 2,5 процент чухлĕ чакармалла; пĕрремĕш сортлă продукци 25 процентран кая мар туса кăлармалла; икĕ йышши çĕнĕ издели туса кăларма пуçламалла т. ыт. те.

«Пекарь» артельри алăстаççем хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртме тытăннă.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатмалла

Республикăра укçа-тенкĕ пухас ĕç çителĕксĕр пырать. III-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана августăн 1-мĕшĕ тĕлне республикипе 19 процент кăна тултарнă. Уйрăмах налог укçи, страховани тӳлевĕсем пухасси юлса пырать.

Республикăри пĕр района та укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе хальхи вăхăтра лайăх ĕçлет теме çук. Ку тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлекен Çĕрпӳ районĕ, Шупашкар, Канаш тата Улатăр хулисем те çак кварталти плана 30—35 процент çеç тултарнă.

Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Çĕмĕрле, Комсомольски, Пăрачкав, Йĕпреç, Чкаловски, Элĕк тата Улатăр районĕсем вара укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ытла та начар ĕçлеççĕ. Вĕсем кварталти плана 10 процентран ытла тултарман. Укçа-тенкĕ пухас ĕçре малта пынă Чурачăк районĕ те юлашки вăхăтра çак ĕçе сӳрĕклетрĕ.

Республикăри финанс работникĕсен хăйсен ĕçне вăйлатмалла. Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртура тимлĕн ĕçлесе, кая юлнине пĕтермелле.

И. ЗОЛОТНИКОВ.

Измаил хулинче Суворов памятникне лартаççĕ

ИЗМАИЛ, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Украина Совнаркомĕ йышăннă тăрăх Измаил хулинче аслă вырăс полководецне Александр Суворова чысласа памятник лартаççĕ.

Измаил хулинче пурăнакан çынсем сĕннипе çав памятнике лартма 1914 çултах тытăннă пулнă, анчах часах тĕнчери пĕрремĕш вăрçă пуçланса кайнă, унтан тата Бессарабие оккупациленĕ, вара памятнике лартса пĕтерме май килмен.

Суворов скульптури çав вăхăт хушшинче Одесса музейĕсенче сыхланса тăнă.

Памятник çуллĕшĕ—7 метр. Унăн постаменчĕ—чугун хăмасенчен, çав хăмасене Киевра хатĕрленĕ. Постамент çине Суворов илнĕ орденсене туса хунă. Гранитран тунă цоколь йĕри-тавра клумбăсем пулаççĕ.

Памятник лартас ĕçе хула общественноçĕ активлăн хутшăнать. Суворов памятникне августăн 26-мĕшĕнче—Измаил облăçне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларни çулталăк тултарнă кун — уçма хатĕрленеççĕ.

МОЛДАВИ ТЕРРИТОРИНЕ МИНĂСЕНЧЕН ТАСАТСА ПĔТЕРЕС ĔÇ ВĔÇЛЕННĔ

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнине пула Молдавирен тухса тарнă гитлеровецсем республикăн хулисене, уйхирпе çулйĕрĕсене минăсем лартса хăварнă. Пуринчен ытларах минăсем Бендеры, Оргеев тата Бельцы уезчĕсенче пулнă. Молдавие ирĕке кăларнă хыççăн пирвайхи кунсенчен пуçласах Осоавиахим членĕсен отрячĕсем унăн территорине минăсенчен тасатма пуçланă. Ятарласа ирттернĕ курссенче 400 инструктора яхăн тата 3.600 çынна мина тасатакан боецсем пулма вĕрентсе хатĕрленĕ.

Осоавиахим членĕсем республика территорине минăсенчен тасатас ĕçе вĕçленĕ. (ТАСС).

Генералиссимус Чан-Кай-ши телеграмми

Унăн превосходительствине Генералиссимуса И. В. СТАЛИНА

Совет Союзĕ паянтан пуçласа Японие хирĕç вăрçа тухни пĕтĕм Китай халăхне çав тери вăйлăн хавхалантарса ячĕ.

Китай правительстви, Китай халăхĕ тата Китай çарĕ ячĕпе Сире, çавăн пекех тата Совет Союзĕн правительствине, унăн геройла халăхне тата çарне çавăн пек решени йышăннă май пĕтĕм чунчĕререн хĕпĕртесе саламни çинчен пĕлтеретĕп.

Китай хăйне хӳтĕлесе вăрçма тытăнсанах, пире пуринчен малтан Совет Союзĕ мораллĕ тата материаллă çав тери пысăк пулăшу пачĕ, çав пулăшушăн пирĕн халăх пысаккăн тав тăвать.

Совет Союзне нациллĕ Германи ирсĕррĕн тапăнсан, пирĕн халăх пĕтĕм шухăшкăмăлĕпе Совет Союзĕ майлă пулчĕ. Сирĕн çĕршывăрăн паттăр çарĕсем, эсир ăслăн та хăюллăн ертсе пынипе, хаяр тăшман çулне пӳлсе лартрĕç, унтан Берлина çитиччĕнех каялла хăваласа ячĕç те нацистсен шăтăкне аркатса тăкса, Европăра мир туса хучĕç,—çаксем пурте пирĕн халăха çав тери хавхалантарса пысăк вăй пачĕç.

Халĕ, Германие çĕнтернĕ хыççăн, Сирĕн çĕршывăр хăйĕн мĕнпур хăватне пĕтĕм тĕнчипе мирлĕ пурнăç туса хурассине хăвăртлатнă çĕре хурать, Китайпа, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе, Великобританипе тата ытти союзниксемпе килĕштерсе ĕçлесе, Японие хирĕç—агресси çулĕ çине чи малтан тăнă çĕршыва хирĕç вăрçа тухнă хыççăн, пирĕн çĕршыв çарĕсем Сирĕн çарсемпе алла-аллăн тăрса тăшмана хирĕç çапăçма тивĕçлĕ пулчĕç.

Эпĕ çакна шанса тăратăп: çав тери йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ, анчах çапах та юлашки чун хавалĕпе çапăçакан Японие çывăх вăхăтрах татăклăн аркатса тăкăпăр, çакă вара пĕтĕм Хĕвелтухăç Азире никам пăсайми мирлĕ пурнăç туса хурассине çывхартĕ.

ЦЗЯН ЧЖУ-ЧЖЕН.

ЧУНЦИН, 1945 çулхи августăн 9-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЕН УКАЗЕ

Польша Маршалне Михаил Роля-Жимерские „Çĕнтерӳ“ орденĕпе наградăласси çинчен

Польшăн хĕçпăшаллă вăйĕсене организацилес тĕлĕшпе çав тери паллă ĕçсем тунăшăн тата пĕтĕмĕшле тăшмана хирĕç — гитлерла Германие хирĕç пыракан татăклă çапăçусенче Польша çарĕн операцийĕсене ăнăçлăн туса пынăшăн, Польша маршалне Михаил **Роля-Жимерские**—**«Çĕнтерӳ» орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи августăн 9-мĕшĕ.

„Маршал Жуков“ тата „Маршал Говоров“ ятлă прахутсем

Сурçĕр-хĕвеланăç юхан шывĕсем çинчи прахутсем çумне пассажирсене турттаракан 8 прахут, 12 буксир хутшăннă. Пахчаçимĕçсем турттармалли çĕнĕ прахутсене «Лермонтов», «Тургенев», «Салтыков-Щедрин» тата «Вересаев» ятсем панă. Пассажирсене турттармалли 2 чаплă прахута «Маршал Жуков» тата «Маршал Говоров» ятсем панă. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хусан чугун çулĕн уйрăмах палăрнă работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 150-мĕшпе 151-мĕш номерĕсенче.

42. Николай Петрович **Праухина**—Улатăр станцийĕн деповĕнчи машинист помощникне.
43. Александр Васильевич **Пухова**—çулăн 4-мĕш дистанцийĕн 5-мĕш околоткĕнчи çул пăхакана.
44. Семен Александрович **Пчелова** — Канашри вагонсем юсакан заводри ĕçпе ĕçукçи пайĕн начальникĕн заместительне.
45. Лидия Даниловна **Рогожинăна** — Шупашкар станцийĕнчи билет кассирне.
46. Алексей Ефимович **Рожкова**—çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи бригадира.
47. Степанида Романовна **Романовăна**—çулăн 17-мĕш дистанцийĕн 2-мĕш околоткĕнчи çул пăхакана.
48. Зоя Ивановна **Семеновăна**—çулăн 14-мĕш дистанцийĕн кадрсен пайĕн начальникне.
49. Александр Михайлович **Терюкалова**—Канаш станцийĕн деповĕнчи паровоз машинистне.
50. Иван Андреевич **Ушкова**—Улатăр станцийĕнчи дежурнăя.
51. Иван Тихонович **Федина**—Çĕмĕрле станцийĕнчи вагонсен сцепщикне.
52. Мария Ивановна **Федоровăна**—çулăн 5-мĕш дистанцийĕнчи бригадира.
53. Павел Иванович **Федосеева**—Улатăр станцийĕн деповĕнчи машиниста.
54. Николай Иванович **Фурмазнина** — движени службин 3-мĕш отделенийĕнчи поезд диспетчерне.
55. Василий Максимович **Храмова** — Çĕмĕрле станцийĕнчи маневрсем тăвакан паровоз машинистне.
56. Степан Васильевич **Хроменкăна** — Канашри вагонсем юсакан заводри модельщике.
57. Василий Яковлевич **Ямпольские**—Канаш станци узелĕнчи парти комитечĕн секретарьне.
58. Иван Яковлевич **Ятнова**—Алтышево станцийĕнчи дежурнăя.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи августăн 4-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культура тата искусство работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 135, 138, 141, 142, 145, 146 тата 147-мĕш номерĕнче.

ШУПАШКАР ХУЛИ ТĂРĂХ:

113. Филипп Михайлович **Николаева**—3056-мĕш номерлĕ эвакогоспитальри врач-ординатора.
114. Марфа Павловна **Никоненока** — заводри прессовщицăна.
115. Дора Самойловна **Ноделе**—Чăвашсен государство музыка училищинчи фортепиано класĕн педагогне.
116. Афанасий Гаврилович **Носова** — заводри механически цех начальникне.
117. Апполинария Андреевна **Обаковăна**—СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйĕн тырпул тухăçне пĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен пайĕн начальникĕн заместительне.
118. Елизавета Ивановна **Оболенскаяна**—Чăвашсен государство академи театрĕн актрисине.
119. Юрий Иванович **Оржебовские** — заводри пухакап цех начальникне.
120. Анна Захаровна **Орленкăна**—Чăваш ялхуçалăх институтĕнчи марксизм-ленинизм тата политика экономи кафедрин старши преподавательне.
121. Николай Ильич **Осадченкăна** — заводри инженер-электрика.
122. Евгения Евдокимовна **Отнюшкевăна**—ВКП(б) Обкомĕн технически работницине.
123. Павел Никитич **Панышева** — 713-мĕш çулйĕр эксплоатаци участокĕнчи платнике.
124. Михаил Лукич **Перлова**—ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх пайĕн инструкторне.
125. Анна Ивановна **Петровăна**—Республикăри библиотекăн вулакансен залĕнчи старши библиотекаре.
126. Агния Дмитриевна **Плетнева-Соколовăна**—ботаника кафедрин доцентне, Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи биологи наукисен кандидатне.

(Малалли пулать).

Американецсен Совет Союзне пулăшса тăракан обществин президенчĕ Мускава килни

Августăн 9-мĕшĕнче Мускава американецсен Совет Союзне пулăшса тăракан обществин президенчĕ Эдвард Картер тата çав общество правленийĕн членĕ Давид Вейнгард килнĕ.

Центральнăй аэродромра вĕсене çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: Хĕрлĕ Хĕрес Исполкомĕн Председателĕ С. А. Колесников, ВОКС Правлени Председателĕн Заместителĕ А. В. Караганов, ВОКС тата Хĕрлĕ Хĕрес Исполкомĕн ответлă сотрудникĕсем тата ыттисем те.

Союзниксен Репараци Комиссийĕн Франци делегацийĕ Мускава килни

Берлинри конференци Союзниксен Репараци Комиссине Франци представителĕсене кĕртме йышăннă решени тăрăх, августăн 9-мĕшĕнче Мускава Союзниксен Репараци Комиссийĕн Франци делегацийĕ килнĕ. Делегацие делегаци пуçлăхĕн заместителĕ Руэф господин пуç пулса ертсе пырать (делегаци пуçлăхĕ Кулондр посол сывмар пулнă пирки Францире юлнă, вăл каярахпа килессе кĕтеççĕ).

Делегацие çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: Союзниксен Репараци Комиссийĕн Генеральный секретарĕ Г. П. Аркадьев, Францин Совет Союзĕнчи послĕ Катру генерал, Союзниксен Репараци Комиссийĕнчи Британи представителĕн заместителĕ сэр Давид Уэйли, Наркоминделăн 1-мĕш Европа отделĕн представителĕ С. С. Немчина тата Францин Мускаври посольствин сотрудникĕсем.

Совет Правительстви Финляндипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçласси çинчен йышăннă решени пирки Финлянди Правительстви тунă заявлени

Совет Правительстви Финляндипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçласси çинчен йышăннине пĕлтерсен, Финляндин Министрсен Совечĕн Председателĕ Паасикиви господин августăн 6-мĕшĕнче Союзниксен Контроль Комиссин председательне А. А. Жданов генерал-полковника çакăн пек заявлени ярса панă:

«Совет правительстви Финляндипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлама йышăнни тата пĕр-пĕрин патне посланниксем ярса пама Финлянди Правительствине панă сĕнӳ Министрсен Совечĕн членĕсене питĕ кăмăла кайрĕ. Çак сĕнĕве пурнăça кĕртес тесе, Правительствăран килекен мероприятисене пурне те халех тума тытăнăпăр».

Финлянди çамрăкĕсен демократиллĕ Союзĕн делегацийĕ Мускава килни

Августăн 9-мĕшĕнче Мускава, Совет çамрăкĕсен фашизма хирĕçле Комитечĕ чĕннипе, Финлянди çамрăкĕсен демократиллĕ Союзĕн делегацийĕ килнĕ. Делегацие Союз председателĕ Юрье Ахомаа ертсе пырать. Делегаци составне çаксем кĕреççĕ: çамрăксен демократиллĕ Союзĕн ответлă секретарĕ Аннели Аарике, организациллĕ секретарь — Пауль Руус, «Теря» хаçат редакцийĕн секретарĕ — Керту Каунискангас, демократиллĕ пионерсен Союзĕн центральнăй бюро членĕ—Сайско Лахья, çамрăксен демократиллĕ Союзĕн районри Комитечĕсен секретарĕсем: Тойво Карппинен, Калка Нуутинен, Тойво Юннен, Хилка Кукконен тата Тойво Миккола.

Финляндири çамрăксен демократиллĕ Союзĕн делегацийĕ совет çамрăкĕсен пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе паллашать.

Аэродромра Финлянди çамрăкĕсен демократиллĕ Союзĕн делегацине çаксем кĕтсе илнĕ: Совет çамрăкĕсен фашизма хирĕçле Комитечĕн ответлă секретарĕ Воинова юлташ, комитет членĕсем: республикăн тава тивĕçлĕ артистки, сталинла премин лауреачĕ Лепешинская, Совет Союзĕн Геройĕ Троян тата совет пичечĕн представителĕсем. (ТАСС).

Тырпул пухса кӗртес ӗҫ—пӗтӗм халӑх ӗҫӗ

Ҫак ӗҫе вӑхӑтра туса иртерсе хамӑрӑн государство умӗнчи тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫлар!

Ыраш акма тухнӑ

Пӑрачкав районӗнчи Ильич тата Максим Горький ячӗпе тӑракан колхозсем ӗнер, августӑн 10-мӗшӗнче, ыраш акма тухнӑ.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ, августӑн 10-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем ыраш акма лайӑх хатӗрленсе тухрӗҫ. «Красный октябрь» колхоз 7 гектар, Нариман, Ленин, Киров, Ворошилов ячӗсемпе тӑракан колхозсем кашниех 5-шер гектар акнӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз кивӗ ыраш акать, ытти колхозсем кӑҫалхи ыраша ҫапма ӗлкӗрнӗ.

З. АХСЯНОВ,
Районри ҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ.

Массӑллӑн тырӑ выраҫҫӗ

ТӐВАЙ, августӑн 10-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те массӑллӑн ыраш вырма тытӑнчӗҫ. Паянхи кун тӗлне пурӗ 500 гектар ытла вырнӑ.

«Новый путь», «Трудовой путь», «Звезда» колхозсем ыраша ҫуррине ытла вырнӑ.

Ҫанталӑк йӗпе-сапа тӑни питӗ чӑрмантарать, анчах колхозниксемпе колхозницӑсем, уяр сехете пӗрре те сая ямасӑр тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Анаткас Тушкилри «Звезда» колхоз тепӗр икӗ кунтан ыраш вырса пӗтерет. Кунта ҫурлапа вырнипе пӗрлех, лобогрейкӑсемпе те ҫулаҫҫӗ. Авӑн ҫапас ӗҫе ҫумӑр чӑрмантарнине шута илсе, районра 63 витнӗ итем, 21 авӑн тунӑ. Халӗ кашни колхозра, кашни бригадӑра авӑн тӑвас задача лартрӑмӑр. Авӑнсене ҫак кунсенчех туса пӗтеретпӗр. Ҫапнӑ тырра типӗтме 18 сушилка тунӑ.

Г. КУРАКИН,
Районри ҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ.

Тырӑ вырма тытӑнчӗҫ

КӐКЕҪ, августӑн 10-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем ыраш вырма массӑллӑн тытӑнчӗҫ. «Зерно», «Чӑваш Коммуни», «Трудовик», «Чигирь», «Новая деревня», Войков ячӗпе тӑракан колхозсенче ыраш вырас ӗҫе лайӑх организациленӗ. «Зерно» колхозра пӗр кун хушшинче 4 гектар вырса пухса, тырӑ ан пӑсӑлтӑр тесе, кӗлтесене майӑра ҫӗмелӗсене хунӑ. «Чембак» колхозӗнер кӑна тырӑ вырма тухрӗ, кун ҫумӑрлӑ пулин те 3 гектар ытла вырнӑ. Ӗнер ҫак колхоз хӑйӗн кивӗ тыррине 90 пӑт ытла государствӑна пачӗ. Нумай колхозсенче столовӑйсем ӗҫлеҫҫӗ. «Память Ленина», Ворошилов ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсенче ача яслисем ӗҫлеме пуҫларӗҫ.

Районри колхозсенче кӗлте типӗтме 119 авӑн тунӑ.

* *

СӖРПӲ. Шӗнер, Ҫырмапуҫ тата Шуртавӑн ял Совечӗсене кӗрекен колхозсемсӗр пуҫне, районри ытти колхозсем пурте ыраш вырма тытӑннӑ. «Красные Тиуши», «Красный бригадир», «Ӗмӗт», «1905 ҫул» тата ытти колхозсем 20 гектартан пуҫласа 35 гектара ҫити ыраш вырнӑ.

Кок-сагыз тухӑҫлӑ пулнӑ

Елчӗк районӗнчи «Путь Ленина» колхозӑн кӑҫал 2,5 гектар ҫинче иккӗмӗш ҫул ӳсекен кок-сагыз пур. Кок-сагыз участокӗнче колхозниксем кӑҫал 3 хутчен йӑран хушшисене кӑпкалатнӑ, 2 хутчен ҫумласа тислӗк шӗвекӗпе апатлантарнӑ. Ҫапла пӑхнипе пула кок-сагыз пысӑк тухӑҫлӑ вӑрлӑх панӑ. Пухса илсе типӗтсе тасатнӑ хыҫҫӑн пурӗ 50 килограмм лайӑх вӑрлӑх пулнӑ.

Ответлӑха туйса ӗҫлемелле

ИШЛЕЙ. Районри 86 колхозран 50 колхоз ытла ыраш вырма тытӑнчӗҫ. Анаткас-Марка, Тӑран, Ишек, Пӗрремӗш-Алӗн ял Совечӗсенчи колхозсенче ыраш пӗтӗм лаптӑкӗпех пиҫсе ҫитнӗ. Ку ял Совечӗсенчи колхозсенче 2—3 кун ӗнтӗ хӗрсех ыраш выраҫҫӗ.

Пӗрремӗш-Алӗн ял Советӗнчи «Самолет» колхозра (председателӗ Н. Амурцев коммунист) ыраш вырас ӗҫе малтанхи кунтанах лайӑх организациленӗ. Ҫавапа ҫулма уйӑрнӑ колхозниксем ҫавапа ҫулаҫҫӗ. Тырӑ вырнӑ вӑхӑтра ҫумӑр ҫуса чӑрмантарать пулсан та, кунта кулленхи нормӑна ытлашшипех тултараҫҫӗ. Ҫумӑр ҫуман вӑхӑтпа туллин усӑ кураҫҫӗ, ҫумӑр иртсе кайсанах ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех «Красный флаг», «МОПР», «Правда», Андреев, Папанин ячӗсемпе тӑракан колхозсенче те ыраш вырас ӗҫе лайӑх организациленӗ.

Районри пур колхозсенче те ыраш пиҫсе ҫитнӗ пулин те, ыраш вырма тухман колхозсем те пур-ха. Мамӑш ял Советӗнчи 4 колхозран 2 колхоз кӑна ыраш вырма тухнӑ. Каманин тата Партин 17-мӗш съезчӗ ячӗсемпе тӑракан колхозсен председателӗсем И. Петровпа М. Терентьев юлташсем: ыраш пиҫсе ҫитмен-ха, тесе лараҫҫӗ. Ырашӗ тӗллӗн-тӗллӗн пиҫсе ҫитнине асӑрхамаҫҫӗ. Катраҫ, Васлккасси тата Ҫӗньял-Покровски ял Советӗнчи колхозсем те ыраш вырма пикенсе тытӑнман. Ҫӗньял-Покровски ял Советӗнчи «Сталь» колхоз 3-мӗш кун ӗнтӗ ыраш вырать. Ҫак колхозпа кӳршӗллӗ «Хозандай», «Ҫӗньял» колхозсен председателӗсемшӗн ҫаплипех ыраш пиҫсе ҫитмен пулмалла.

Катраҫ ял Советӗнчи «Мотор» колхоз председателӗ Арсентьев уяр ҫанталак вӑхӑтӗнче туйсене ҫӳренӗ пирки халӗ те утӑ ҫулса пӗтермен. Колхоз ыраш вырма тухма хатӗр мар, иккӗмӗш хут ҫӗртме сухи туман.

Халӗ ялхуҫалӑх ӗҫӗн ответлӑ тапхӑрӗ пуҫлапчӗ. Вӑйлӑ тырра тӑккаламасӑр пухса кӗртмелле, ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпул никӗсне хывса хӑвармалла.

В. ГУСЬКОВ.

Тырра сорт енчен ҫумласа тасатаҫҫӗ

Муркаш районӗнчи «Свобода» колхоз 1941-мӗш ҫултанпа сортлӑ тырӑ акса, икӗ районри колхозсенчи вӑрлӑх участокӗсем валли сортлӑ вӑрлӑх парса тӑрать.

Колхоз кӑҫал 698 гектар тӗштырӑ акнӑ. Вӗсене вӑхӑтра ҫумкурӑкӗнчен тасатса тӑнӑ. Халӗ 482 гектар ҫинчи кӗрхи тата ҫурхи тулла сорт енчен ҫумласа тухрӗҫ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах Пюнков бригади лайӑх ӗҫлет.

Йӗпреҫ райисполкомӗ тырпул пухса кӗртес ӗҫе мӗнле ертсе пырать

Йӗпреҫ районӗнчи чылай колхозсем тырпула уйран пуҫтарса кӗртме кирлӗ пек хатӗрленмен.

«Ҫӗнтерӳ» колхозӑн мӗнпурӗ 378 гектар тырпул пухса кӗртмелле. Ӗҫлеме пултараканни 81 ҫын шутланать. Фермӑра ӗҫлекенсем, колхоз пурлӑхне сыхлакансем, правлени аппаратӗнче ӗҫлекенсем 27 ҫын. Колхоз правленийӗ палӑртса хунӑ тӑрӑх, тырпул пухса кӗртес ӗҫе, пурне те шута илсен те, 87 колхозник ҫеҫ хутшӑнма пултарать. Тырпул пухса кӗнӗ хӗрӳ ӗҫ вӑхӑтӗнче фермӑран, правленинчен тата ытти ҫавӑн евӗрлӗ ӗҫсенчен хӑтарса, нумай колхозниксене кирлӗ вырӑна лартмалла пулнӑ. Ку вара тырпул пухса кӗртес ӗҫе нумай хӑвӑртлатма пулӑшнӑ пулӗччӗ. Анчах ҫакна тумаҫҫӗ.

Йӗпреҫ районӗнче тырпул пухса кӗртес ӗҫ ҫине ҫителӗклӗ ҫаварӑнса пӑхманни ҫакӑнтан та лайӑх курӑнать. Чӑваш АССР Совнаркомӗ райсовет исполкомӗсене июлӗн юлашки числисенче тырпул пухса кӗртес ыйтупа райсовет сессийӗсене иртерме хушрӗ. Йӗпреҫ райсовет исполкомӗ ҫакна пурнӑҫламарӗ.

Ҫӗнӗ Чураш ял Совечӗ июлӗн 19-мӗшӗнче хӑйӗн сессине иртерчӗ. Унта тырпул пухса кӗртесси ҫинчен пӗр сӑмах та каламан. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «1945 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине колхозниксене ӑнлантарса паман. Ахальтен мар ӗнтӗ ку ял Советне кӗрекен «Красный партизан», «Ударник», «Чувашия» колхозсенче ку тарана ҫитсе те ҫурласене шӑллаттарса пӗтермен, кӗрепеллӗ ҫавасем туман, урапасем ҫитмеҫҫӗ, шӑналӑксемпе михӗсем уйрӑм колхозниксем патӗнче выртаҫҫӗ. Амбарсене юсама тытӑнман.

Районри ертсе пыракан организацисенчи ответлӑ юлташсем колхозсенче сайра хутра пулаҫҫӗ. «10 лет Октября» колхозра икӗ ҫул хушшинче пӗр ответлӑ юлташ та пулман. Ку колхоз Йӗпреҫ районӗнче чи пысӑк колхозсенчен пӗри. Суракине илсен те, тырпул пухма хатӗрленнине илсе пӑхсан та, ку колхоз калама ҫук начар ӗҫлени курӑнать. Сураки планне тултарман. Икӗ гектар ҫӗре ним акмасӑр хӑварнӑ. Суртыррисене ҫумкурӑк пусса илнӗ. Тыпулсене пухса кӗртме те колхоз начар хатӗрленнӗ. Тырӑ вырмалли машинӑна юсаман. Урапасене, ут таврашӗсене уйрӑм колхозниксене салатса панӑ. Колхоз правленийӗ миҫе урапа пуррине, лаша хатӗрӗсем ҫитнипе ҫитменнине паян кун та пӗлмест. Ҫурласене шӑлласа пӗтермен, кӗрепеллӗ ҫавасем ҫук. 4 жнейкӑран пӗрне те юсаман, вӗсем пайӑн-пайӑн унта-кунта сапаланса выртаҫҫӗ. Витнӗ итем шӑтса юрӑхсӑра тухнӑ, ӑна юсама пуҫӑнман та. Колхоз председателӗ Григорьев, ял Совет председателӗ Семенов юлташсем колхозри ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес тесе сахал тӑрӑшаҫҫӗ.

Йӗпреҫ районӗ темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ ялхуҫалӑх ӗҫӗнче кая юлса пыракан район шутланать. Райсовет исполкомӗпе ҫӗрӗҫ пайӗ колхозсене кирлӗ пек ертсе пымаҫҫӗ. Кунта партипе правительство директивисене ҫителӗклӗ таран пурнӑҫа кӗртсе пыни ҫук. Чылай колхозниксем хӑйсен хуҫалӑхӗнче ытларах ӗҫлеҫҫӗ, колхозра пачах ӗҫлеменнисем те пур. Нормӑпа палӑртса хунӑ ӗҫкунӗсен хисепне тултарман колхозниксем нумай. Анчах вӗсене ӗҫе явӑҫтарас тӗлӗшпе нимӗн туни те курӑнмасть-ха.

Тырпула уйран пухса кӗртесси, государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем вӑхӑтра парасси колхозсен чи кирлӗ ӗҫӗ пулса тӑрать. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртме районри мӗнпур колхозниксене мобилизацилемелле, уйрӑмах кая юлса пыракан колхозсенче ытларах ӗҫлемелле.

П. ИВАНОВ.
Чӑваш АССР Совнаркомӗн территориальнӑ-инструкторски пайӗн заведующийӗ.

Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫлани пирки ют ҫӗршывсенче мӗн калаҫҫӗ

США

ВАШИНГТОН, августӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). США-н тинӗс-ҫар министерстви хаҫатсенче тинӗс-ҫар министрӗ Форрестол Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫланӑ май Совет флотне янӑ послание пичетлесе кӑларнӑ. Унта ҫапла каланӑ: «США флочӗ Совет Союзӗн флочӗ Японие хирӗҫ вӑрҫа тухнине саламлать. Совет флочӗпе совет пехоти Арктика океанӗнче, Балтикӑпа Хура тинӗссенче Европӑра пуҫпулса тӑма хӑтлаканакан вӑйсене хирӗҫ кӗрешни пире ҫав тери тӗлӗнтерсе савӑнтарчӗ. Хальхи вӑхӑтра США флочӗ совет флочӗн офицерӗсемпе тата матросӗсемпе Япони шывӗсем ҫинче тӗл пуласине кӗтет.

НЬЮ-ЙОРК, августӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчӗ Гаум утравӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Лӑпкӑ океан ҫинчи флочӗн командующийӗ Нимиц адмирал США-н Лӑпкӑ океан ҫинчи флотне панӑ хӑйӗн приказӗнче ҫапла каланӑ:

«Пирӗн хӑватлӑ союзник Россия Японие хирӗҫ вӑрҫа тухнине эпир саламлатпӑр. Пӗрлешнӗ ытти нацисемпе пӗрле Японие хирӗҫ географи тӗлӗшӗнчен лайӑх позици йышӑннӑ тата ҫапӑҫусенче тӗрӗсленнӗ паттӑр вырӑс ҫарӗсем Японие аркатса тӑкассине хӑвӑртлатма пулӑшӗҫ. Лӑпкӑ океан ҫинчи флот, хӑй енчен, вырӑссене пур тӗлӗшпе те пулӑшса тӑрӗ».

ВАШИНГТОН, августӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Сенатор-республиканец Кордон (Орегон штатӗнчен) ТАСС корреспондентне ҫапла каласа панӑ: «Европӑри вӑрҫа ҫӗнтерӳллӗн вӗҫленӗ союзниксем пӗрлешсе кӗрешнипе юлашки задачӑна та ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлассине ӑнланса илни ҫав тери кӑмӑла хӑпартлантарать. Россия Азири хирӗҫӗве хутшӑнни мир тӑвас ӗҫе хӑвӑртлатас тӗлӗшпе пысӑк пулӑшу парасси курӑнсах тӑрать. Ҫӗнӗ килӗшӳ ҫавӑн пекех пӗтӗмӗшлӗ миршӗн вӑрҫӑ хыҫҫӑн татах та таччӑнрах пӗтӗҫсе ӗҫлессине пӗлтерекен ырӑ хыпар пулса тӑрать».

ЛОНДОН, августӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Манилӑри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен Лӑпкӑ океан ҫинчи типҫӗр вӑйӗсен командующийӗ Макартур генерал ҫапла каланӑ: Россия Японие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫлани Японие хупӑрласа илсе ун ҫине анлӑн тапӑнса пыма май парать, тенӗ. Ҫав ӗҫ тӑшмана аркатса тӑкнипе вӗҫленмелле. «Эпӗ,—тенӗ Макартур,—Россия Японие хирӗҫ вӑрҫа тухни ҫинчен пӗлтернипе савӑнатӑп. Европӑри вӑрҫӑра Россия — Хӗвелтухаҫ фронтӗнче, союзниксем — Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пулчӗҫ. Халь союзниксем—Хӗвелтухаҫӗнче, Россия—Хӗвеланӑҫӗнче пулать, анчах результатсем малтанхи пекех пулӗҫ».

АНГЛИ

ЛОНДОН, августӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫланӑ май Эттли премьер-министрӑн резиденцийӗ пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: «Паян Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫа тухасси ҫинчен пӗлтерни тӗп союзниксем пӗрлешсе ӗҫленине кӑтартса парать. Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл кӗрешӳ срокне кӗскетмелле, пӗтӗмӗшлӗ мир туса хумалли условисене йӗркелемелле. Совет Российӑн ҫав аслӑ решенине эпир саламлатпӑр».

ЛОНДОН, августӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Акӑлчансен ирхине тухакан хаҫачӗсенче Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫлани ҫинчен пӗлтернине пысӑк заголовоксемпе пичетлесе кӑларнӑ. Ҫак хыпар ытти темӑсене пурне те хупласа тӑрать.

Хаҫатсем В. М. Молотов юлташ тунӑ заявление чи курӑнмалли вырӑнта тата пӗтӗмӗшпех пичетлесе кӑларнӑ. Кун пирки каланисенче пуринче те Совет правительстви йышӑннӑ решени Японие хӑрасине палӑртнӑ.

ЛОНДОН, августӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллӗ обозревателӗ ҫапла ҫырать: Совет правительстви Японие хирӗҫ вӑрҫа тухасси ҫинчен йышӑннӑ решение Лондонри официальнӑй тата официальнӑй мар ушкӑнсенче те тулли кӑмӑлпа кӗтсе илнӗ. Совет правительстви йышӑннӑ решени вӑрҫӑ стратегийӗ тӗлӗшпе паллӑ вырӑнта тӑни курӑнсах тӑрать. Инҫетри Хӗвелтухаҫӗнче вӑрҫӑ нумая пырас ҫуккине халӗ общественность курать ӗнтӗ.

КАНАДА

ОТТАВА, августӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Канадиэн пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Канада премьер-министрӗ Маккензи Кинг, Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫа тухни ҫинчен пӗлсен, пичет представителӗсемпе калаҫса, ҫапла каланӑ: ҫак япала вӑл Европӑра ҫӗнтерӳ кунне уявласа иртернӗ хыҫҫӑн ҫӗнӗ, чи пысӑк хыпар пулса тӑрать. «Вӑрҫӑ вӗҫленсе пырассине пӗлни пӗтӗм тӗнчене пысӑк ҫӑмӑллӑх кӳрет»,—тенӗ Кинг.

ПОЛЬША

ВАРШАВА, августӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Польша хаҫачӗсем паян чи курӑнмалли вырӑнта ССР Союзӗпе Япони хушшинче вӑрҫӑ пуҫланни ҫинчен В. М. Молотов Япони посолне Сатона пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. «Глос Люду» хаҫат «Мире хӳтӗлекен» ятлӑ умстатьяра ҫапла каланӑ: ирӗклӗхе юратакан этемлӗх фашистла Германие хирӗҫ вӑрҫнӑ чухне Совет Союзӗ тӗп вӑй пулса тӑчӗ. Совет халӑхӗ хӑйӗн хӑвачӗпе тата паттӑрлӑхӗпе ирӗклӗхе юратакан халӑхсем хушшинче ӗмӗрлӗхех чапа тухрӗ.

Япони хирӗҫ тӑма пӑрахма килӗшмен пирки пӗтӗм тӗнчери мир хӑрушлӑх умӗнче тӑнине тата халӑхсен жертвисем ӳссе пынине палӑртса, «Глос Люду» ҫапла ҫырать: «Мирлӗ пурнӑҫ туса парассишӗн тата халӑхсене мирпе телей тума пулӑшассишӗн СССР Японие хирӗҫ пыракан вӑрҫа хутшӑнчӗ».

Бирнс пресс-конференцире калани

ВАШИНГТОН, августӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Совет Союзӗ Японие хирӗҫ вӑрҫа тухни ҫинчен Трумэн президент пӗлтернӗ хыҫҫӑн, США-н государство секретарӗ Бирнс ятарласа пухнӑ пресс-конференцире официальнӑй йӗркепе заявлени тунӑ. Ҫав заявленире вӑл японецсем малалла хирӗҫ тӑрса кӗрешни усӑсӑрах пулнине Япони халӑхӗ хальхи вӑхӑтра ӑнланса илессине шанни ҫинчен каланӑ.

Унтан Бирнс ҫапла каланӑ: «Совет правительстви августӑн 9-мӗшӗнчен пуҫласа Японие хирӗҫ вӑрҫа тухни ҫинчен пӗлтернине эпӗ саламлатӑп. Совет правительствин ҫак утӑмӗ вӑрҫӑ вӑхӑтне кӗскетмелле тата нумай ҫынсем вилессине чармалла. Тӑшмана парӑнтарас тӗлӗшпе Европӑра пӗрлешсе ӗҫленӗ союзлӑ державӑсем Инҫетри Хӗвелтухаҫӗнче те пӗрлешсе ӗҫленипе этемлӗхе мирлӗ пурнӑҫ парӗҫ тесе шухӑшламаса эпӗ савӑнатӑп».

Малалла Бирнс демократиллӗ аслӑ державӑсен Инҫетри Хӗвелтухаҫ вӑрҫинчи позицийӗ ҫине Трумэн президент епле пӑхни ҫинчен каласа панӑ.

ПЕТЭНА СУД ТУНИ

ПАРИЖ, августӑн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Августӑн 7-мӗшӗнче Петэн сучӗнче Виши «правительствин» шалти ӗҫсен министрӗ пулнӑ Марсель Пейрутон свидетельтен ыйтса пӗлнӗ. Марсель Пейрутона суда Френ тӗрминчен илсе пынӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: Лаваль нимӗҫсемпе пӗрле французсен Вӑтаҫӗр Африкӑри Чад кӳлли районӗнче тӑракан ирӗклӗх ҫарӗсене тапӑнас ӗҫе организацилеме тӑрӑшнӑ. Анчах ҫав вӑхӑтрах Пейрутон Лаваль ҫавӑн пек преступлени тума хатӗрленнӗ ҫӗре Петэн хутшӑнмасӑр тӑнине кӑтартасшӑн пулнӑ. Присяжнӑй заседатель Пейрутонран: Сурҫӗр Африкӑра Виши правительстви тунӑ концентраци лагерӗсенче ҫынсенӗ ҫав тери асаплантарса мӑшкӑллани ҫинчен Петэн пӗлнӗ-и?—тесе ыйтнӑ. Пейрутон ҫак ыйтӑва ответ парассинчен пӑрӑннӑ. Пейрутон хыҫҫӑн хӳтӗлекен адвокатсем ыйтнипе чӗнсе пынӑ чылай свидетельсенчен ыйтнӑ. Вӗсем пурте оккупаци вӑхӑтӗнче Петэнпа пӗр пулса ӗҫленӗ, ҫавӑнпа та вӗсем хӑйсен сӑмахӗсенче хӑйсене хӳтӗлесӗ тӑнӑ, Петэпа тӳрре кӑларма тӑрӑшнӑ.

ПАДИЛЬЯ АРГЕНТИНАПА ҪЫХАНСА ТАНИ ҪИНЧЕН ПӖЛТЕРНИ ПИРКИ МЕКСИКА СЕНАТОРӖ КАЛАНИ

МЕКСИКО, августӑн 2-мӗшӗ. (ТАСС). (Вӑхӑтра ҫитереймен). Уругвайпа Чили хаҫачӗсенче Сан-Франциско хулинчи конференцире Аргентина майлӑ тухса калас умӗн Падилья Парон полковникран 3 миллион песо укҫа илни ҫинчен пичетлесе кӑларнӑ пирки августӑн 2-мӗшӗнче правительство органӗ «Эль Насьональ» тата ытти хаҫатсем те Адриан Моралес Салас сенатор каланине пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл ҫапла каланӑ:

«Пирӗн ҫӗршыври тата ют ҫӗршывсенчи обществӑллӑ шухӑш Падилья тата ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви ӑнлантарса панипе ҫырлахма пултарайман», тенӗ. Малалла Моралес Салас сенатор ҫапла каланӑ: «Ҫителӗклӗ тата тивӗҫлӗ ответ» пулман пирки Мексика сенаторӗсем республикӑн главнӑй прокуратурине ҫак ӗҫе тӗпчесе тухмашкӑп сӗпме шутларӗҫ. Моралес Салас ҫапла хушса хунӑ: политикӑллӑ шухӑпсем пирки ҫак йӗркесӗр ӗҫе пытарса хӑварма хӑтланнипе эпир килӗшме пултараймастпӑр, тенӗ.

Хуҫасӑр килкартине вӗлтӗрен пусать

Фельетон

Ӗҫрен тухсассӑн, эпир юлташпа иксӗмӗр Атӑл хӗррине уттартӑмӑр. Хӗвел кӑмӑллӑн пӑхать, кун ырӑ. Кун пек чухне Атӑл хӑй патнеллех илӗртет ҫав. Мӗн тӑвас тетӗн...

Пытӑмӑр та, тӗкӗр пек ҫуталса выртакан Атӑл ҫине пӑхкаласа тӑратпӑр. Унччен те пулмарӗ:

— Куратни?—терӗ мана юлташ, аякран кӑт-кӑт тӗртсе.

Эпӗ юлташ тӗллесе кӑтартнӑ ҫӗрелле тинкерсе пӑхрӑм. Унта, хӑватлӑн кашласа ӳсекен куршанак тӗмисем хушшинче, кунӑҫта пуҫӗ пек шурӑ пуҫлӑ икӗ ача хыпаланса куршанак татаҫҫӗ.

— Куршанака та пӗр-пӗр эмел тума пухаҫҫӗ-и вара?—тесе ыйтатӑп эпӗ, ыланаймасӑр.

— Каларӑн—эмел тума! Мыскара тума,—тесе ответлерӗ мана юлташ. Вӑл вара ҫавӑнтах кӗскен пӗр кулӑшла истори каласа пачӗ.

— Иртнӗ кӗркунне ҫавӑн пек пӗрре ӗҫрен питӗ ҫӗрлене юлса таврӑнтӑм. — терӗ юлташ.—Ывӑннӑскер, хайхи, хытӑ ҫывӑрса кайнӑ пулнӑ. Мӗн ямакӗ?.. Сӑмсана тем йӗплесех чикет. Куҫа уҫса пӑхатӑп та арӑм ман сӑмсана куршанакпа тӗртет. Хытах тӗртет тата... Малтан ҫав куршанак мапа чӗрӗп ами пысӑкӗшех курӑнса карӗ. «Ӑҫта пултӑн? Ӑҫтан ҫаклатса килтӗн ҫакна?» тесе тӗпчет арӑм. Хам нимӗн те ӑнланса илейместӗп-ха. Пысӑк истори пулса иртрӗ вара арӑмпала. Кунӗпе шухӑшласа ҫӳрерӗм—ӑҫтан ҫаклатма пултарнӑ-ха ман ҫумма ҫав куршанак?.. Каҫхине тин тавҫӑрса илтӗм. Ав ҫавӑн пек шакла пуҫсем, пӗрер картус куршанак татса, хапхасем ҫине хӑпарса лараҫҫӗ те иртен-ҫӳренсене мыскара туянтарса яраҫҫӗ. Килте вара арӑм тӗпчет: ӑҫта пултӑн, ӑҫтан куршанак ҫаклатса килтӗн? Скандал вӗт!

Эпӗ, ҫакӑ анекдот пекрех япалана илтсен, малтан ахӑлтатсах кулса ятӑм, кайран вара, Атӑл хӗррипе кашласа ӳсекен куршанак тӗмисем ҫине тепӗр хут пӑхрӑм та, шухӑша кайрӑм.

Вунӑ ҫул каярах, 1935 ҫулта, эпир ҫакӑнта Атӑл хӗррине пӗтӗм хулипе тенӗ пек тухса ӗҫлеттӗмӗр. Унччен малтан Атӑлӑн Шупашкар ҫывӑхӗнчи ҫыранӗсем нимӗн латти ҫук ишӗлсе выртатчӗҫ. Шыв-шурпа ишӗлсе пӗтнӗ хӗрлӗ тӑмлӑ ҫыран темӗнле нихӑҫан тӳрленейми суран пек курӑнса выртатчӗ.

Мӗн тумасть этем алли! Шупашкар ӗҫсыннисем, хӑйсен юратнӑ хули тӗлӗнчи Атӑл ҫыранне кӗреҫепе тикӗслетсе, талккишӗпех ҫерем сарса тухрӗҫ. Атӑл тӑрӑх шурӑ пӑрахутпа хӑпарнӑ чухне хайхи эпир сарнӑ ҫерем тӗлӗнмелле ешӗл кавир пек курӑнса выртакан пулчӗ.

Халӗ? Халь ҫав паха ешӗл кавирпе пӗтӗмпех вӗлтӗренпе куршанак тӗмисем пусса илнӗ. Ҫав ӑншӑрт тымарлӑ ҫумкурӑксем нимӗнле хула советне те пӑхӑнмаҫҫӗ иккен. Сӗнсӗррӗн ӳсеҫҫӗ, явӑлсем! Вӗсем юратнӑ Атӑлӑн пейзажне кӑна мар, ӗҫсыннисем нумай вӑй хурса, типтерлесе сарнӑ ҫереме те пӑсаҫҫӗ.

Эпӗ хамӑн ҫак шухӑша питӗ хӗрӳленсе юлташӑма каласа патӑм.

Юлташӑн сасартӑках куҫӗсем темӗнле чӑрсӑртарах кӑварпа суталчӗҫ.

— Пӗлетни,—терӗ вӑл,—ҫак куршанака кам сурӑмӗ ҫумне сыпӑҫтармалла? Хула Советӗнчи хӑшпӗр ҫынсен...

— Чухлатӑп,—терӗм эп.—Чухлатӑп...

Эпир ҫаврӑнса каялла уттартӑмӑр.

— Астӑватни, кӑҫалхи юбилей умӗн хулара ӗҫ мӗнле вӗресе тӑчӗ?

— Астӑватӑп,—терӗ юлташ—астӑватӑп.

Юбилей кӗрлесе иртсе кайрӗ. Парксем йӗри-тавра тытнӑ илемлӗ решеткесем ҫинчи сенкер-кӑвак сӑрра ҫумӑр шӑлса парахать. Тин ҫеҫ лартнӑ йывӑҫсене хӳтӗлекен капӑр читлӗхсене те чылай ҫӗрте тӳнтере-тӳнтере янӑ. Карл Маркс урамӗнчи газонсемпе клумбӑсене вӗтӗ вӗлтрен, сысна пӑрҫи, мӑян пусса илнӗ.

Акӑ Хӗрлӗ Площадь. Кунта икӗ пахчана кӗме икӗ енне икӗ чаплӑ хапха туса лартнӑччӗ. Юбилей иртсен, вӗсем ҫумне икшер киосок лартма хӑтланчӗҫ. Чипер тытса тухнӑ пахча картисене пӑчкӑпа касса киоск лартмалли вырӑнсем турӗҫ. Анчах киосксене туса пӗтермерӗҫ. Киосксемпе пахча карти хушшисенче вара ача-пӑчасем тата... качакасемпе сыснасем кӗрсе ҫӳремелли шӑтӑксем пулса юлчӗҫ. Пӗр-ик ҫул каярах Кайбулка шывӗ урлӑ Ярославски урамран Чапаев поселокне Шупашкар урамне ҫуран каҫмалли питӗ лайӑх пусмасемпе кӗпер пурччӗ. Ҫавӑн пек капӑр пусмасем тӑрӑхах эпир Урицки урамран Ворошилов урамне анса ҫӳреттӗмӗр. Ӑҫта вӗсем? Нумай урамсенче, уйрӑмах Симӗс пасарпа пыракан Заводски урамра, иртсе ҫӳреме ҫук—пылчӑк. Кӗркунне унта мӗн пулӗ?

— Ахаль каламан ҫав,—пулчӗ мана юлташ,—хуҫасӑр килкартине вӗлтӗрен пусать тесе.

— Тӗрӗс,—терӗм эпӗ те.—Анчах ҫак сӑмах та ахаль ан ҫухалтӑрччӗ. Вӑл куршанак пулса, хула Совет исполком председателӗн тумтирӗ ҫумне сыпӑҫтӑрах!

Афанасий ЙЕП.

ЛӐПКӐ ОКЕАН ҪИНЧИ ВӐРҪӐ

ЛОНДОН, августӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви панӑ хыпар тӑрӑх, союзниксен Лӑпкӑ океан ҫинчи ҫарӗсен командованийӗн штабӗ ҫапла пӗлтерет: августӑн 5-мӗшӗпе 6-мӗшӗнче американецсен 7-мӗш флотилийӗн самолечӗсем тата ҫар авиацийӗн самолечӗсем, 400 ытла вӗҫев туса, Корейӑран пуҫласа Малайӑна тата Голланди Индине ҫити, шывра японецсен 59 суднине пӗтерсе тӑкнӑ е сиен кӳнӗ. Америка авиацийӗ Японин Сикоку утравӗнчи Мацуяма аэродромӗ ҫине, ҫавӑн пекех тата Хайнань утравӗнчи, Шанхайри ҫар объекчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

ВАШИНГТОН, августӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). США-н Лӑпкӑ океан ҫинчи флочӗн штабӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, августӑн 8-мӗшӗнче, американецсен 3-мӗш флочӗн авианосецӗсем ҫине вырнаҫса тӑракан самолечӗсем тата Англи самолечӗсем Японин Хонсю утравӗн ҫурҫӗр пайӗнчи ҫар объекчӗсене тата аэродромӗсене атакӑланӑ.

Ҫав кунах американецсен пӗр линкорӗ тата ытти ҫар карапӗсем японецсен Уэйк утравӗнчи ҫар объекчӗсем ҫине пенӗ. Американецсен ҫар авиацийӗн самолечӗсем, Алеут утравӗсенче вырнаҫса тӑраканскерсем, Сюмуси утравӗнчи Катаска ятлӑ тинӗс-ҫар бази ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Тинӗс авиацийӗ японецсен Курильски утравсен шутне кӗрекен Оннекотан утравӗ ҫинчи ҫар объекчӗсене атакӑланӑ.

ВАШИНГТОН, августӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Американецсен Лӑпкӑ океан ҫинчи стратегиллӗ сывлӑш-ҫар вӑйӗсен командованийӗн штабӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, августӑн 8-мӗшӗнче американецсен 79 истребителӗ Осака районӗнчи 4 аэродрома тата ытти ҫар объекчӗсене ӑнӑҫлӑн атакӑланӑ. «Вӗҫекен крепость» йышши 93 самолет Фукуяма хули ҫине 400 тонна ытла вут хыптаракан бомбӑсем пӑрахнӑ. «Вӗҫекен крепость» йышши ытти 67 самолет Накадзимӑри авиаци завочӗ ҫине тата Токиори арсенал ҫине 400 тонна бомба пӑрахнӑ.

ТРУМЭНПА БИРНС ПӖРЛЕШНӖ НАЦИСЕН УСТАВНЕ РАТИФИКАЦИЛЕССИ ҪИНЧЕН КАЛАКАН ДОКУМЕНТА АЛӐ ПУСНӐ

ВАШИНГТОН, августӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: Трумэнпа Бирнс Пӗрлешнӗ Нацисен Уставне ҫирӗплетесси ҫинчен калакан сенат документне алӑ пуснӑ. Ҫапла ӗнтӗ, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем ҫак устава официальнӑй йӗркепе ҫирӗплетнӗ.

СОВЕТ СОЮЗӖПЕ ФИНЛЯНДИ ХУШШИНЧЕ ДИПЛОМАТИЛЛӖ ҪЫХӐНУ ПУҪЛАСА ЯНӐ МАЙ

ХЕЛЬСИНКИ, августӑн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Финляндири радио пӗлтернӗ тӑрӑх, августӑн 7-мӗшӗнче Хельсинки хулинче тухакан хаҫатсем пурте чи курӑнакан вырӑнта Совет Союзӗпе Финлянди хушшинче дипломатиллӗ ҫыхӑну ҫӗнӗрен пуҫланса кайни ҫинчен калакан хыпара пичетлесе кӑларнӑ.

КӖСКЕН

* Тито маршал Нови-Сад тата Петроварагин хулисене пырса кайнӑ, унта вӑл ҫав хуласене ҫыхӑнтарса тӑракан Дунай шывӗ урлӑ кӗпере, ҫав тери кӗске вӑхӑтра туса хунӑскере, пӑхнӑ. Рабочисем Тито маршала хавасланса йышӑннӑ. (ТАСС).

ХРОНИКА

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Сергей Александрович Голунский юлташа СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариачӗн Коллегийӗн членӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

Ответлӑ редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Завода ҫакӑн пек рабочисем, инженерсемпе техниксем кирлӗ

Инженерсемпе техниксем: металла сивӗлле ӗҫлекен электриксем, конструкторсем, литейщиксем, химиксем, лаборантсем: **администрацина хуҫалӑх работникӗсем**: снабженецсем, кладовщиксем; **шут работникӗсем**: бухгалтерсем, счетоводсем, табельщиксем, нарядчиксем; юсакан мастерсем, пухакан мастерсем, инструмент мастерсем, штамплакан мастерсем, вӗрилле преслакан мастерсем, токарьсен ӗҫӗн мастерӗсем, автомеханиксем, тӗрӗс приборсен механикӗсем.

Рабочисем: токарьсем, револьверщиксем, автоматчиксем, фрезеровщиксем, штамповщиксем, слесарьсем, инструментальщиксем, лекальщиксем, юсакан слесарьсем, пухакан слесарьсем, автослесарьсем, шоферсем, формовщиксем, заливщиксем, модельщиксем, чугун ҫул ҫинчи транспорт рабочийӗсем; **строительство рабочийӗсем**: каменщиксем, бетонщиксем, арматурщиксем, платниксем, столярсем, малярсем тата ыттисем те.

Электромонтерсем: обмотчиксем, намотчиксем, связистсем, радистсем, телефонистсем, электросварщиксем; лавҫӑсем, конюхсем, тимӗрҫӗсем, шорниксем, подсобнӑй рабочисем, уборщицӑсем, дворниксем, ҫуртсемпе общежитисен коменданчӗсем; **обществӑллӑ апатланассин работникӗсем**: поварсем, официантсем, кухньӑри рабочисем. Ҫӗрпӳ хули ҫывӑхӗнче заводӑн подсобнӑй хуҫалӑхӗнче ӗҫлеме ялхуҫалӑх работникӗсем.

Ҫартан таврӑнакан ҫынсене ҫарта илнӗ профессисем тӑрӑх квалификаци ӳстерме завод производство вӗрентӗвне организациленӗ.

Вӗрентессе кунта тӗп ӗҫрен хӑтармасӑр вӗрентеҫҫӗ, вӗренекенсем ӗҫукҫи илеҫҫӗ тата вӗсене уйрӑм списокри рабочисемпе пӗртан снабжени параҫҫӗ.

Завод ҫакӑн пек профессиллӗ рабочисем вӗрентсе хатӗрлет: токарьсем, револьверщиксем, автоматчиксем, фрезеровщиксем, строгальщиксем, слесарь-инструментальщиксем, юсакан слесарьсем, автослесарьсем, шоферсем, электромонтерсем, связистсем, телефонистсем, пухакан слесарьсем, механиксем, сехет мастерӗсем, модельщиксем, формовщиксем, заливщиксем, прессовщиксем; **строительство рабочийӗсем**: каменщиксем, платниксем, столярсем, штукатурсем, малярсем; **шут работникӗсем**: бухгалтерсем, счетоводсем, табельщиксем, нарядчиксем.

Конструкторсемпе лаборантсем хатӗрлекен курса ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкултан вӗренсе тухнисене илеҫҫӗ. Вӗреннӗ вӑхӑтра вӗсене уйӑхне 300—400 тенкӗ стипенди параҫҫӗ. Уйрӑм списокри рабочисемпе пӗртан снабжени параҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех тата завод хуралне вахтерсем тата пушар командинче ӗҫлеме работниксем кирлӗ.

Общежити параҫҫӗ.

Районсенчен килекенсене завод чугун ҫулпа тата шыв ҫулӗпе килме тухнӑ тӑкака саплать.

Заводра электромеханика техникумӗ тата ҫамрӑк рабочисен шкулӗ пур. Кунта ӗҫлеме пӑрахмасӑрах техникӑллӑ вӑтам шкултан вӗренсе тухма тата 10 ҫул вӗренмелли вӑтам шкултан вӗренсе тухма пулать.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, Карла Маркса, 80, Бюро пропусков. Ҫырусене ҫак адреспа ямалла: гор Чебоксары, п/я 24, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместителӗн — 2—89, секретариатӑн — 4—26, пропаганда пайӗн — 2—89, парти пурнӑҫ пайӗн 3—99, промышленность пайӗн — 3—97, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, рабселькорсен пайӗн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00390 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000